Вĕрентекен çулталăкĕ

# Хастаррисем – çамрăксем хушшинче те

Районти предприятисем, организацисемпе учреждениесем çумĕнче çамрăксен канашĕсем пурри çамрăк специалистсен ĕçне интереслĕрех тума, професси шайне ÿстерме май парать. Çак тĕллевпех район администрацийĕн вĕрентÿ, çамрăксен политики тата физкультурăпа спорт пайĕ çумĕнче те районти çамрăк педагогсем хăйсен «Пеликан» ятлă канашне 2007 çулхи декабрь уйăхĕнчех йĕркелесе ячĕç. Çапла вара çамрăк специалистсем районăн обществăлла тата политика пурнăçне хутшăнасси, пурнăçра активлă ене суйласа илесси палăрмаллах ÿсме тытăнчĕ, ачасене пĕлÿ парас ĕçре те пĕр-пĕрин опычĕпе паллашасси уçăмлăрах пулма пуçларĕ.




«Пеликанра» – чи активлă та хăйсен ĕçĕнче аван кăтартусем тума ĕлкĕрнĕ çамрăк специалистсем. Вĕсен йышĕнче – аслă категориллĕ учительсем, Раççей тата Чăваш Республикин Президенчĕсен гранчĕсене çĕнсе илнисем, Президент стипендиачĕсем, районти çамрăксен парламенчĕн членĕсем тата тĕрлĕ конкурссен çĕнтерÿçисем. Ку вара канашăн ят-сумĕ пĕчĕк маррине тÿрремĕнех кăтартса парать. Çамрăк вĕрентекен пурнăçпа тан пытăр, вĕрентекен профессийĕ хисеплĕ пултăр тесе çамрăк специалистсем те сахал мар ĕç туса ирттереççĕ: тĕрлĕ канашлусенчен пуçласа шкула анчахрах ĕçлеме килнĕ çамрăк учительсем валли ятарлă занятисем ирттересси таранах. Сăмах май каласан, çамрăк учителĕн кодексне те «алă пуссах çирĕплетнĕ» канаш ларăвĕнче. Кодекс вĕрентÿ сферине ĕçлеме килекенсемшĕн кашни кун сĕтел çинче пулмалли пĕрремĕш документ пекех.

Район шайĕнчи пур мероприятие те хутшăнма тăрăшаççĕ çамрăк педагогсем: çамрăксен форумĕсене, спорт ăмăртăвĕсемпе экологи акцийĕсене тата ыт. те.

Канаша, ăна йĕркеленĕ кунран пуçласах, Мăн Сĕнтĕр шкулĕнче тата Муркаш лицейĕнче акăлчан чĕлхине вĕрентекен Л.В. Храмова ертсе пырать. Унăн çумĕ Р.Н. Сапожников та (вăл Муркашри лицейра физикăпа математика вĕрентекенĕ) районти пултаруллă, çĕнĕ мелсене ĕçе кĕртсе пыракан çамрăк учительсен ретĕнченех.

Акă Людмила Валерьевна Храмова, сăмахран, Муркашри лицей республикăри инновациллĕ вĕрентÿ программисене тĕрĕслессипе эксперимент лаптăкĕ пулнăран, хăйĕн урокĕсене ятарлă программăна тĕпе хурса хатĕрлет. Кунта акăлчан чĕлхине Оксфорд университетĕнче кăларнă кĕнекесемпе вĕренеççĕ. Ачасем акăлчан чĕлхине алла илессине халăхсем хушшинчи стандарт шайне çитерессипе тăрăшаççĕ лицейра. Çавăнпах Людмила Валерьевнапа унăн вĕренекенĕсем республикăри тĕрлĕ конференцисемпе семинарсенчен, уçă уроксенчен тата ятарлă тестсенчен айкинче тăрса юлмаççĕ. Çĕнĕлле иртекен уроксем ачасен кăмăлне те тивĕçтереççĕ.

Çамрăк педагогсен канашĕнче, унăн ертÿçи пекех, хастар специалистсем пĕрле ĕçлесе пыраççĕ. Пурнăçа кĕртме палăртнă ĕçсене вĕсем ветерансемпе канашласа, çĕнĕлĕхсене алла илсе хăйсен шкулĕсенче йĕркелесе малалла тăсаççĕ.

**Н. НИКОЛАЕВА.**

**Сăн ÿкерчĕкре: уçă урок хыççăн Л. Храмова вĕренекенсемпе пĕрле.**

Спорт хыпарĕсем

## Çĕнтерÿçĕ паллă

Иртнĕ шăмат кун «Сывлăх» ФСК-ра арçын ветерансен командисем волейболла выляреç. Маларах пĕлтернĕ ăмăртăва пурĕ 7 команда килсе çитрĕ. Хĕрÿ вăйăсенче çĕнтерÿçĕ ятне «Ударник» команда çĕнсе илме пултарчĕ. 2-мĕш вырăнта – «Ильичасем», 3-мĕшĕнче – «Ильинка». Тĕрлĕ номинацисенче чи лайăх вылякансем çаксем пулчĕç: Иван Иванов тата Николай Александров («Ударник»), Михаил Пылин («Ильинка»).

## Ухăçăсен ăмăртăвĕнче

Çамрăк ухăçăсем вара – Татьяна Кулаковапа Алена Елизарова – канмалли кунсенче республика ăмăртăвĕнчен аван кăтартусемпе таврăнчĕç. В. Егорова ячĕллĕ ачасемпе çамрăксен спорт шкулĕн тренерĕн И. Воробьевăн вĕренекенĕсем призерсен шутне кĕнĕ: Алена хăйĕн ÿсĕмĕнче кĕмĕл, Татьяна бронза медаль çĕнсе илнĕ.

## Кÿршĕ республикăра – малтисен ретĕнче

Çакăн пек çитĕнÿсемпе таврăннă Çармăç Республикинчи Виловатово салинче иртнĕ район шайĕнчи йĕлтĕрçĕсен ăмăртăвĕнчен В. Егорова ячĕллĕ ачасемпе çамрăксен спорт шкулĕн вĕренекенĕсем. Тĕрлĕ ÿсĕмсенче пирĕн районти çамрăксем – А. Харьков, С. Иванова, А. Степанов, К. Иванова – çĕнтерÿçĕсем пулса тăнă. Г. Михайловапа О. Андреева хăйсен дистанцийĕсенче кĕмĕл призерсем пулма, А. Мясников бронза медале тивĕçнĕ. К. Никоновапа Д. Скворцов та япăх мар ăмăртса тăваттăмĕш вырăнсене тухнă.

В. Егорова ячĕллĕ ачасемпе çамрăксен спорт шкулĕ ăмăртăва çитсе килме пулăшнăшăн И.Н. Никитин предпринимателе тав тăвать.

**Хамăр инф.**

## Старта йĕлтĕрçĕсем тухаççĕ

**Çитес вырсарни кун, февралĕн 14-мĕшĕнче,** пирĕн районта та, çĕршывăн ытти кĕтесĕсенчи пекех, **«Раççейри йĕлтĕр йĕрĕ – 2010»** чупу иртĕ. Унта вĕрентÿ учрежденийĕсен, ял тăрăхĕсен, ял хуçалăхĕсен, предприятисемпе организацисен командисем хутшăнма палăртнă. Командăсенче миçе çын пулмаллине ятарласа çирĕплетмен, анчах та пĕтĕмĕшле кăтартăва комндăри чи лайăх 6 результата пăхса палăртаççĕ.

Çак чупупа пĕрлех йĕлтĕрçĕсем **Муркашра Социализмла Ĕç Геройĕ Е.А. Андреев парнисене çĕнсе илессишĕн** ăмăртаççĕ. 1993-94 çулсенче çуралнă хĕрсен – 5 км, яшсен – 10 км, 1995-96 çулсенче çуралнă хĕрсен - 3 км, яшсен - 5 км ăмăртмалла. 1992 çулта çуралнисемпе аслăраххисен те çак дистанцисемех. Ертÿçĕсен VIP-чупăвне ирттерессине те палăртнă.

Йĕлтĕрпе чупса ăмăртма 40-рен тата 50-ран иртнĕ ветерансен уйрăм старчĕсем те (арçынсен – 5 км, хĕрарăмсен – 3 км) пулаççĕ.

Ăмăртусене савăнăçлă лару-тăрура йĕлтĕр базинче 11 сехетре уçаççĕ.

**Хамăр инф.**

Пирĕн пата çыраççĕ

# Паттăрлăх урокĕсенче – паттăрсем

Аслă Çĕнтерÿ кунне кăçалхипе 65-мĕш çул уявлать çĕршыв. Çакна халалласах иртнĕ кунсенче Юнкă шкулĕнче пур класра та паттăрлăх урокĕсем иртрĕç.

Шкула Тăван çĕршывăн Аслă вăрçин ветеранĕ Григорий Никифорович Илугин, районти афганецсен пĕрлешĕвĕн ертÿçи Вячеслав Евсеевич Киршев, Афганистан вăрçине хутшăннă тата Калайкассинче афганецсене асăнса музей йĕркеленĕ Николай Иванович Зайцев, интернационалист-салтак Владимир Аверкиевич Цветков хăйсен пурнăçĕнчи вăрçăпа çыхăннă тапхăрĕсем çинчен, çак вăрçăсене хутшăннă ытти ентешсен пурнăçĕ çинчен аса илчĕç. Вĕсем хутшăннипе уроксем интереслĕ иртрĕç.

Çак кун шкул ачисем Тăван çĕршывăн Аслă тата Афган çĕрĕ çинчи вăрçăсем çинчен ятарлă видеофильмсем те курма пултарчĕç, В. Цветков хатĕрленĕ сăн ÿкерчĕксен альбомĕ те кашнин аллинчех пулса курчĕ.

Уроксем хыççăн вара ăрусен çыхăнăвне малалла тăсса пурте пĕрле Тăван çĕршывăн Аслă тата Афган вăрçисем пирки, уйрăммăн Сталинград патĕнчи çапăçусем тата Григорий Никифорович вăрçă ветеранĕ çинчен хатĕрленĕ презентацисемпе паллашрĕç.

Хăнасем ачасен ыйтăвĕсене хуравларĕç. Тĕл пулăва хатĕрленсе шкулта кĕнеке выставки те ĕçлерĕ, стена хаçачĕсем те кăларчĕç вĕренекенсем. Çак кун пире – вĕренекенсене – питĕ килĕшрĕ.

**Мария СЫТИНА.**

Çăварни эрни

# Икерчĕ çиер-и?

### САХĂРЛĂ ИКЕРЧĔ

200 г çăнăх, 250 г хăйма, 3 çăмарта, 1 чĕптĕм тăвар, ваниль сахăрĕ, кăштах теркăланă лимон хуппи, ăшалама ислам çу, 50 г сĕт, çиелтен сапма сахăр кирлĕ.

Асăннă çимĕçсене хутăштарса лайăх пăтрататпăр. Çÿхе икерчĕсем туса ылтăн-сарă тĕс пуличчен ăшалатпăр. Вĕсене рулет евĕр чĕркесе çиелтен тÿрех сахăрпа сапатпăр.

### ÇŸХЕ ИКЕРЧĔСЕМ

8 çÿхе икерчĕ пултăр тесен 50 г çăнăх, 125 г сĕт, тăвар, 1 чей кашăкĕ сахăр, 2 çăмарта, услам çу кирлĕ. Çăнăха, сĕте тăварпа сахăра пĕрле хутăштарса чуста лăкамалла. Ăна 1 сехетлĕхе холодильника лартмалла. Пĕçерес умĕн чустана тепĕр хутчен пăтратса илмелле.

**Продается КВАШЕНАЯ КАПУСТА местного ЛПХ, оптом и в розницу: ВКУСНА! ПОЛЕЗНА! КАЧЕСТВЕННА! Цены ниже рыночных. Заказы принимаются по тел.: 8-961-343-07-88. Возможна доставка. 2-2.**

**12 февраля в РДК состоится ярмарка-продажа обуви Ульяновских и Белорусских фабрик. Пенсионерам – скидки.**

## Пĕлтерÿсем. Объявления

**Спутниковые антенны «ТРИКОЛОР» с установкой, гарантией и обслуживанием. Тел.: 8-905-345-77-19. 4-6.**

**Итоги проведения публичного слушания по проекту решения муниципального правого акта «Об изменении разрешенного использования земельного участка» на территории Большесундырского сельского поселения Моргаушского района ЧР.**

**2 февраля 2010 года прошли публичные слушания по проекту решения муниципального правого акта «Об изменении разрешенного использования земельного участка».**

**На указанных выше публичных слушаний было принято следующее решение:**

**Одобрить проект решения муниципального правого акта «Об изменении разрешенного использования земельного участка».**

**Администрация Моргаушского района сообщает о наличии свободного земельного участка, распределяемого на праве аренды, из категории «земли сельскохозяйственного назначения» с кадастровым номером 21:17:0:293, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Кадикасинское сельское поселение, для ведения прудового хозяйства, площадью 11902 кв. м.**

**Заявки принимаются в течение месяца с даты опубликования объявления по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6 (здание администрации), кабинеты № № 312 и 317, с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 62-2-66.**

**Администрация Моргаушского района сообщает о наличии свободного земельного участка, распределяемого на праве аренды, из категории «земли населенных пунктов» с кадастровым номером 21:17:080403:125, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Юнгинское сельское поселение, с. Юнга, ул. Молодежная, для ведения личного подсобного хозяйства, площадью 1663 кв. м.**

**Заявки принимаются в течение месяца с даты опубликования объявления по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6 (здание администрации), кабинеты № № 312 и 317, с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 62-2-66.**

**Администрация Моргаушского района сообщает о наличии свободного земельного участка, распределяемого на праве аренды, из категории «земли населенных пунктов» с кадастровым номером 21:17:070604:32, местоположение: участок находится примерно в 210 м по направлению на северо-запад от ориентира ОМЗ-618, расположенного за пределами участка: адрес ориентира: Чувашская Республика, Моргаушский район, Кадикасинское сельское поселение, д. Кадикасы, для строительства мини-магазина, площадью 40 кв. м.**

**Заявки принимаются в течение месяца с даты опубликования объявления по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6 (здание администрации), кабинеты № № 312 и 317, с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 62-2-66.**

**Срочно продается двухкомнатная квартира старой планировки в центре с. Моргауши. 45,2 кв. м., 2-2 этаж, кирпичный дом. Документы для продажи готовы. Тел.: 8-927-85-42-997, 8-927-99-18-444. 2-4.**

Администрация Моргаушского района выражает глубокое соболезнование главе района Иванову Юрию Александровичу, его родным и близким по поводу кончины отца
**ИВАНОВА**
**Александра Ивановича.**

Отдел Министерства финансов Чувашской Республики по Моргаушскому району выражает глубокое соболезнование главе администрации Моргаушского района Иванову Юрию Александровичу в связи с тяжелой утратой-смертью отца
**ИВАНОВА**
**Александра Ивановича.**

«Единая Россия» партин Муркаш районĕнчи уйрăмĕ, политканаш членĕсем район администрацийĕн пуçлăхĕн, партин политканашĕн секретарĕн Ю.А. Ивановăн ашшĕ
**Александр Иванович**
**ИВАНОВ**
вилсе кайнă пирки тарăннăн хурланни çинчен пĕлтереççĕ.

Районти «Çĕнтерÿ ялавĕ» хаçат редакцийĕн коллективĕ район пуçлăхĕн Ю.А. Ивановăн ашшĕ
**Александр Иванович**
**ИВАНОВ**
вилсе кайнă пирки унăн çемйипе тата тăванĕсемпе пĕрле чĕререн хурланни çинчен пĕлтерет.

«Сывлăх» физкультурăпа спорт комплексĕн коллективĕ Муркаш район администрацийĕн пуçлăхĕн Ю.А. Ивановăн ашшĕ
**Александр Иванович**
**ИВАНОВ**
вилсе кайнă пирки вĕсен çемйипе тата çывăх тăванĕсемпе пĕрле чун-чĕререн хурланса пĕлтерет.

Муркаш райпо коллективĕ Муркаш район пуçлăхĕн Ю.А. Ивановăн ашшĕ
**Александр Иванович**
**ИВАНОВ**
вилсе кайнă пирки унăн тăванĕсемпе тата çывăх çыннисемпе пĕрле чĕререн хурланни çинчен пĕлтерет.

Управляющая компания ЖКХ и предприятия ЖКХ Моргаушского района выражают искреннее соболезнование главе администрации Моргаушского района Юрию Александровичу и его семье в связи со смертью отца
**ИВАНОВА**
**Александра Ивановича.**

«Ударник» хуçалăх дирекцийĕ, ветерансен канашĕ ку хуçалăхра нумай çул хушши вăй хунă ĕç ветеранĕ
**Александр Иванович**
**ИВАНОВ**
вилсе кайнă пирки унăн çемйипе тата çывăх çыннисемпе пĕрле тарăннăн хурланни çинчен пĕлтереççĕ.

А.Г. Николаев ячĕпе хисепленекен Калайкассинчи пĕтĕмĕшле пĕлÿ паракан вăтам шкул коллективĕ район администрацийĕн пуçлăхĕн Ю.А. Ивановăн ашшĕ
**Александр Иванович**
**ИВАНОВ**
вилсе кайнă пирки унăн çемйипе тата тăванĕсемпе пĕрле чĕререн хурланни çинчен пĕлтерет.

Мăн Сĕнтĕр больница коллективĕ нумай çул хушши ача çуратмалли уйрăмра акушерка пулса ĕçленĕ
**Мария Федоровна**
**МИХАЙЛОВА**
вилсе кайнă пирки çывăх тăванĕсемпе пĕрле тарăннăн хурланса пĕлтерет.

**Моргаушская районная газета «Çĕнтерÿ ялавĕ»**

УЧРЕДИТЕЛИ:
Министерство культуры, по делам национальностей, информационной политики и архивного дела Чувашской Республики.
АУ ЧР «Редакция Моргаушской районной газеты «Çĕнтерÿ ялавĕ» Минкультуры Чувашии.

**Главный редактор А.И. ТИХОНОВ.**
АДРЕС: 429530, Чувашская Республика, село Моргауши, улица Мира, дом 9А.
ТЕЛЕФОНЫ: директор-главный редактор - 62-1-36, заместитель главного редактора - 62-2-82, бухгалтерия - 62-1-35, отделы: общественно-политической жизни - 62-2-82, экономики и социальной жизни - 62-1-38. Факс: 62-1-36; E-mail: morpress@cbx.ru, redaction@cbx.ru

Газета зарегистрирована управлением Федеральной службы по надзору в сфере связи, информационных технологий и массовых коммуникаций по Чувашской Республике – Чувашии. Свидетельство о регистрации ПИ № ТУ 21-00073 от 07 декабря 2009 года.

Объем 1 усл. печатный лист.
Рукописи не рецензируются и не возвращаются, объемом более 2 стр. не принимаются.
Редакция не несет ответственности за содержание рекламных объявлений.

ИНДЕКС ИЗДАНИЯ: 54822.
Газета выходит на чувашском языке по средам, субботам.
Дежурный по номеру Николаева Н.Н.
Номер подписан 09.02.2010 г.
Время подписания в печать: по графику – 17 час. 20 мин, фактическое – 17 час. 20 мин.
Заказ Тираж 3950.

Номер набран и сверстан в РГУ «Редакция Моргаушской районной газеты «Çĕнтерÿ ялавĕ», отпечатан в типографии ГУП "ИПК "Чувашия": 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.